Çитес çул – Çĕр ĕçченĕн çулталăкĕ

## Тимлĕх малти вырăнта



*Эсир сăн ӳкерчĕкре куракан Зоя Ильинична Охотникова пиллĕкмĕш çул ĕнтĕ ăратлă вылăх ĕрчетекен «Свобода» ял хуçалăх производство кооперативĕ-заводра кадрсемпе ĕçлекен инспектор пулса вăй хурать.*

*– Ĕçлекенсен списокри йышĕ 275 çын. Çак вăй пире умри ĕçсене вăхăтра пурнăçласа пыма май парать. Çавăнпа пĕрлех çурхи-кĕрхи ĕçсенче ĕç килĕшĕвĕпе ĕçе илсе ĕçлеттересси те пурнăç айкинче юлмасть, – терĕ Зоя Ильинична компьютер умĕнчен самантлăха уйăрăлса çитес çул Çĕр ĕçченĕн çулĕ пулнăран вăл та ял çыннисем çине ырă витĕм кӳрессе шанса.*

**А. БЕЛОВ сăн ӳкерчĕкĕ.**

Культура

## Форум шанчăк çуратрĕ



Культура министерстви тата Чăваш Республикинчи писательсен икĕ пĕрлешĕвĕ пусарнипе иртнĕ эрнере çамрăк çыравçăсен республикăри пĕрремĕш форумĕ иртрĕ. Культура министрĕ Роза Лизакова чăваш литературин малашлăхĕ çамрăк ăрăва аталанма мĕнле пулăшнинчен, тĕрĕс çул çине еплерех кăларнинчен нумай килни пирки каланă. Çак шухăшпа писательсен пĕрлешĕвĕсен ертӳçисем те килĕшнĕ.

Çамрăк çыравçăсене паян пĕлекенсем те сахал. Ытларах чух вĕсене хулăм литература журналĕсен редакторĕсем çеç палласçĕ. Паянхи куна вара çамрăк çыравçăсен татса паман ыйтусем сахал мар. «Çамрăксен хаçачĕн» корреспонденчĕ Дмитрий Моисеев чи çивĕч ыйтусенчен пĕри çамрăксене пĕрле пухăнса канашламалли, ĕçлемелли вырăн çукки тесе палăртнă.

Форумра «Чăваш кĕнеке издательстви» малашне çамрăк авторсемпе тачă çыхăнса ĕçлесси пирки пĕлтернĕ. Роза Лизакова министр 2009 çулта туса хуракан Чăваш наци радиопа литература передачисем эфира тухасси çинчен пĕлтерсе çамрăк ăрăва палăрмаллах савăнтарнă.

Килти хушма хуçалăх

# Çĕр улми хĕл каçарасси

Район çулленех пысăк лаптăк çинче çĕр улми туса илет. Ял хуçалăх производство кооперативĕсемпе пĕрлех çак ĕçре килти хушма хуçалăхсем те пысăк тăрăшулăх кăтартаççĕ. Ку лайăх-ха, анчах туса илнĕ продукцие упрама пĕлмесен çу каçа вăй хуни хĕл кунĕсенче юрăхсăра тухма та пултарать. Кунта çĕр улми чирĕсем уйрăмах пысăк сиен кӳме пултараççĕ.

Паллă ĕнтĕ, «иккĕмĕш çăкăра» хĕл каçарнă чух ăна тĕрлĕ чир-чĕрпе хурт-кăпшанкă каялла тавăрма çук сиен кӳме пултараççĕ. Вĕсенчен асăрханма пĕлни тухăçа упраса хăварма пулăшать те.

Юлашки вăхăтра упрама хунă çĕр улмине кĕве пысăк сăтăр туни палăрма пуçларĕ. Мĕнре палăрать-ха унăн «ĕçĕ»?

Çак сăтăрçă пахчаçăсем фитосанитари ĕçĕсене йĕркеллĕ туса пымасан сарăлса каять. Вăл уйрăмах килти хушма хуçалăхсене пысăк сăтăр тăвать.

Кĕркунне çĕр улми кăларнă вăхăтра çулсем хĕррипе тăкăнса юлнă, анасем çинче аманнă çĕр улми нумай вырăнтине курма пулать. Аманнă çĕр улмие е выльăхсене çеç памалла, е тĕпренех пĕтермелле. Ахальлĕн вĕл тĕрлĕ вырăнсене саланать.

Çĕр улми кĕви помидор, пăрăç, баклажан çинче те ĕрчет. Анчах вăл çĕр улмие пысăк сиен кӳрет. Кĕвен лĕпĕшĕ кĕмĕл тĕслĕрех, унăн çунаттисен сарлакăшĕ 12-15 мм. Вăл хуракан шурăрах тĕслĕ çăмартасем 0,8 мм тăршшĕ. Гусеници сарăхĕрлĕ е сарă-симĕс тĕслĕ, хура пуçлă, кăкăр патĕнчи урисем 10-13 мм тăршшĕ. Çĕр улми упраннă çĕрте лĕпĕш çăмартисене çĕр улми çурăккисене, унăн куçĕсем çине, ещĕксемпе складри оборудованисем айне, стенасем çине хурать. Çĕр улмие кăларнă чухне вăл механизмсемпе аманнă тĕслĕхсем 0,7-2,3 процент чухлĕ шутланаççĕ. Вĕсем çĕр улми кĕви валли шăпах меллĕ вырăнсем ĕнтĕ. Çăмартаран гусеницăсем пулса çитсен вĕсем хупă айне кĕрсе кукăр-макăр çулсем туса тултараççĕ.

Çĕр улми кĕвипе кĕрешме пур майсемпе те усă курма пулать. Çуркунне сыхă вăрлăха иртерех 15 сантиметртан кая мар тарăнăшне лартмалла. Уйсене таса тытмалла.

Çĕр улми кĕвипе кĕрешме колорадо нăррипе кĕрешмелли имçамсемпе кĕрешни те вырăнлă. Ахальлĕн колорадо нăррипе кĕрешме пăрахсанах çĕр улми кĕви вăй илсе ярать. Кĕве лĕпĕшĕсем хĕвел аннă тата хĕвел тухнă чух питĕ активлă пулнине шута илсе кăларнă çĕр улмине çĕр каçма ана çинчех хăварни вырăнлă мар. Çĕр улмине тĕплĕ суйласа ăна çийĕнчех 16 сехетрен кая юлмасăр хранилищĕсене кĕртсе хумалла. Сиенленнĕ тата пуçтарнинчен юлнă çĕр улмисене пĕçерсе выльăхсене çитермелле.

Килти хушма хуçалăхра çĕр улмине упрама хурас умĕн пĕр процентлă биологилле препаратпа лепитоцидпа имçамламалла. Сывă çĕр улмие 10 литр шыв çине 100 грамм препарат янă растворта 5 минут тытмалла. Хыççăн çĕр улмине типĕтмелле те контейнерсене тултармалла. Вĕсене унччен тасатса хатĕрленĕ хранилищĕсене вырнаçтармалла. Имçамламалли çак ĕçсене çĕр улми кăларнă кунах тумалла. Çĕр улми упрама хуриччен асăннă чир-чĕрпе кĕрешес тĕллевпе хранилищĕсене дезинфекцилени те пысăк пĕлтерĕшлĕ. Кунта райветстанцинчи дезинфекци тăвакан ушкăнпа килĕшӳ туса усă курни те вырăнлă.

Паян хĕл кунĕсем пыраççĕ. Апла пулсан та, чир-чĕрпе кĕрешес ĕçсене çĕр улми упраннă вăхăтра та икĕ уйăхра пĕрре туса ирттермелле. Хĕллехи вăхăтра çĕр улми упраннă чух 3-5 градус температурăра çак сăтăрçăсен пурăнасси-аталанасси пĕтет. Анчах çакă çĕр ĕçченне алă усмалли пĕлтермест.

**А. СЕМЕНОВ,**
**«Россельхозцентр» ФГУн Чăваш Республикинчи филиалĕн Муркаш районĕнчи уйрăмĕн тĕп специалисчĕ.**

Редакци почтинчен

## Тав сăмахĕ калас килет

Хамăр ачасен пурнăçĕпе интересленнĕрен эпир, ашшĕамăшĕсем, шкулта иртекен пухусемпе мероприятисене çӳреме тăрăшатпăр. Ильинка шкулĕнчи пуçламăш классене вĕрентекен Галина Алексеевна Анисова тăрăшнипе пирĕн кашни тĕл пулу интереслĕ иртет.

Шкултан килмен кăлтăксене пула Амăшсен кунне вăхăтра ирттерме май килмерĕ. Кайрантарах ирттернĕ уява та амăшĕсем питĕ кăмăлларĕç. Хăйсен вĕрентекенĕпе тата Н.А. Чернова музыка учителĕпе пĕрле пире валли ачасем çав тери савăнăçлă кун туса парĕç. Чуна пырса тивекен юрăсем, аннесем çинчен вуланă ăшă сăвăсем амăшĕсен чĕрисене хумхантарчĕç, куçсем те шывланчĕç. Темĕн тĕрлĕ куравсем, презентаци те хатĕрленĕ уява валли. Ачасем аннесем патне чуна уçса çырнă çырусенчи сăмахсем паянхи кун та асрах.

Пирĕн ачасемпе тăрăшса ĕçленĕшĕн Галина Алексеевнана питĕ пысăк тав сăмахĕ калас килет. Ачасем пултаруллă та ĕçчен вĕрентекенпе пурнăç çулĕпе пынишĕн эпир питĕ савăнатпăр. Малашне те Галина Алексеевнана çитĕнӳсем тума çирĕп вăй-хал сунатпăр.

**АМĂШĔСЕМ.**

Усăллă канашсем

* Урана хытă ыраттарсан, пир татăкне е тăватта хутлатнă бинта ача-пăча супăнĕпе сĕрĕр (кăпăкĕ шĕвĕ мар хăймапа танлаштăр), вара суран вырăнне хурса çыхса лартăр. Каçалапа çиелтен çăм шарф çыхма пултаратăр. 8-10 сехетрен ура ыратма пăрахать.

* Ӳт çине пӳрленчĕксем тухсан 1 çăмарта сарри, 1 кашăк хĕвел çавранăш çăвĕ, 1 чей кашăкĕ пыл тата кăштах çăнăх илĕр. Хутăштарăр. Хутăша пайласа «икерчĕ» пек сарса пӳрленчĕксем çине çыпăçтарăр. Çыхха кунсерен 2 хутран кая мар улăштарăр. Кĕçех чир иртсе кайĕ.

Малалла пăхакансем бизнес-плансем йышăнаççĕ

# Рынок хутшăнăвĕнче тăкаклă ĕçлеме юрамасть

***(...Çĕр ĕçченĕ, кунĕпех вăй хурса, хăй акнă вăрлăха çĕре шанса парать те килне кайса канлĕн çывăрса каять. Хăй тунă ĕç пыра киле пысăк тухăç парасса вăл çирĕп шанать...)***

***Раççейре «АПКна аталантарасси» наци программи ĕçленĕ вăхăтра пурнăç утăмĕнчен юлмасăр пырасси – паян çĕр ĕçĕпе пурăнакан кашни ĕçченĕн тĕллевĕ. Çавăнпа та Чăваш Республикин Президенчĕ Н. Федоров Патшалăх Канашне тухнă хăйĕн кăçалхи Çырăвĕнче ял хуçалăхне килекен çĕнĕлĕхсенчен çывăрса юлмасăр ĕçлеме чĕнсе калани паянхи пурнăçра уйрăм пĕлтерĕшлĕ. Çитес çула Президентăмăр Çĕр ĕçченĕн çулталăкĕ тесе йышăнни те патшалăх çĕр ĕçченĕсене çине ытларах çаврăнма пуçлани пирки систерет. Çак вăхăтра малашлăха пăхаканăн аслă асаттесем кая юлсан каю шăтать, тесе асăрхаттарнине манас марччĕ, ахальлĕн...***

***Пурнăç аталанăвне тивĕçлĕ шайра тытма кун-çул уттипе тан пырассишĕн эпир кашниех çĕнĕлĕхсем вырăнлă пирки, вĕсене пурнăça кĕртме тăрăшмалли çинчен калаçатпăр. Калаçатпăр та... пирĕн сăмахсем чылай чух чул çине мар, юр çине çеç юлаççĕ.***

Иртнĕ эрне кун, раштав уйăхĕн 12-мĕшĕнче, «Герой» ял хуçалăх производство кооперативĕ кăçалхи ĕçсене пăхса тухса çитес çул валли бизнес-план йышăнассипе хуçалăх ĕçченĕсен пĕрлехи пухăвне ирттерчĕ. Çак ырă тĕслĕхе ырламалла кăна, мĕншĕн тесен чылай хуçалăхсенче хăйсен ĕçченĕсене бизнес-плансемпе «ырă йăлапа» февраль-март уйăхĕсенче иртекен хуçалăхăн отчетпа суйлав пухăвĕсенче паллаштараççĕ. Унченхи икĕ уйăхне вара хуçалăх ĕçченĕсем мĕнле тĕллевпе ĕçлеççĕ, мĕн çĕннишĕн ирттен-каçчен тăрăшаççĕ? Çак ыйтусем кунашкал лару-тăрура вара яланах хуравсăр юлаççĕ. Çав вăхăтрах Раççей те, Чăваш Ен те 10 çул малаллахи плансемпе ĕçлеççĕ, вилсшер çулхи вăхăтсем йышăнаççĕ т. ыт. те.

– «Герой» хуçалăх ĕçлесен ĕç пулнине çирĕплетекен тĕслĕх. Малалла пăхса ĕçлекенсен сирĕн пек хуçалăхран тĕслĕх илме май пуррине эпĕ савăнатăп, эсир пултаруллă ĕçленинчен ытти хуçалăхсем пĕрлех тĕлĕнетĕп. Анчах тĕлĕнме кирлех-и? Эсир хăвăр ума лартнă тĕллев патне çирĕппĕн утăм хыççăн утăм тăвать, Раççей Президенчĕ пуçарнă «АПКна аталантарасси» наци проекчĕпе килĕшӳллĕ ĕçлесе паян та ӳсĕм çулĕпе утма май пуррине ĕçпе çирĕплететĕр. Тавах Сире çакнашкал тăрăшулăхшăн. Эсир паян йышăнакан бизнес-план та сирĕн тĕллевĕрсене усăмлатма çеç пулăшĕ, – терĕ хăйĕн саламлă сăмахĕнче район администрацийĕн пуçлăхĕн çумĕ тата ял хуçалăх пайĕн ертӳçи В. Ананьев.

Çитес çула планлама мĕнле ĕçленĕ-ха кăçал? Çак ыйтупа пухăннисене хуçалăх ертӳçи Р. Тимофеев паллаштарчĕ.

– Çулталăк иртсе пынă май малтанхи пĕтĕмлетӳсене тума та юрать. Вĕсем пирĕн ĕçе, çитменлĕхсемпе умри тĕллевсене кăтартса параççĕ. Мĕн тунипе лăпланса пĕр вырăнта тăма юрамасть. Çавăнпа та пирĕн çĕнĕ çула кĕриччен хамăрăн çитес çулхи ĕçсен бизнесîпланне çирĕплетсе хăвармалла. Бизнес-план проекчĕ хатĕр. Унпа килĕшӳллĕн çитес çул пирĕн ĕç кăтартăвĕсем кăçалхинчен кая пулмалла мар. Юлашки çулсенчи ӳсĕмсене тишкерсен тĕллевсем пурнăçланмаллискерсемех. Хамăрăн пĕр шухăшлă пулмалла кăна, – терĕ бизнес-план проекчĕпе паллаштарнă май Ростислав Николаевич.

Пĕтĕрхипе кăçалхи 11 уйăхри ĕç кăтартăвĕсем чăнах та мал туртăмлă ĕçлеме пултарни пирки калаççĕ. Тĕслĕхрен, кăçал хуçалăх тыр-пул тата çĕр улми лаптăкĕсене ӳстернĕ. Кунпа пĕрлех тухăç ӳснĕ. Тĕш тырăпа пăрçа йышши культурăсен тухăçĕ иртнĕ çулхинчен 10,4 центнер (33,5 ц), çĕр улми 73 центнер (228 ц) пысăкланнă. Кунпа пĕрлех выльăх-чĕрлĕх продукчĕсем туса илесси те малалла утăм тунă. Хĕл кунĕсем валли ытлă-çитлĕ апат хатĕрлени те Шурчасем пĕр вырăнта тăманни пирки калать. 11 уйăхра хуçалăх ӳсет-тăран тата выльăх-чĕрлĕх продукчĕсем 24434 пин тенкĕлĕх сутнă. Ку вăл пĕлтĕрхи çулталăк кăтартăвĕсемпе 126,2 процент пулать. Çакăн чухлĕ ĕç агротехникăна пăхăнса пурнăçланăшăн хуçалăх 11 уйăхра патшалăх пулăшăвне 3327,3 пин тенкĕ илнĕ.

Уйрăм ĕçченсем çинчен калас пулсан, выльăх пăхакансен тăрăшулăхĕ те ӳсен-тăран отраслĕнче вăй хуракансенчен кая марри курăнать. Акă Н. Борисова, Е. Васильева, Л. Андреева ĕне сăвакансем хăйсен ушкăнĕнчи кашни ĕнерен сĕт сăвассине иртнĕ çулхинчен ирттернĕ те. Пăрусем пăхакан Изида Любимован та ĕç кăтартăвĕсем пĕлтĕрхинчен ӳсĕмлĕрех. Унăн пăрăвĕсем çулталăк пуçланнăранпа талăксерен 749 грамм (пĕлтĕр – 603 грамм) ӳт хушнă. Сысна самăртакансен ĕç кăтартăвĕсем те çулталăк хушшинче палăрмаллах лайăхланнă. Кунта ĕçлекен И. Пискарева-па Э. Трофимова ушкăнĕнчи сыснасем талăксерен 590 грамм (пĕлтĕр – 510 грамм) ӳт хушни хуçалăхра резервсем пурри пирки калать.

Çаксене пĕтĕмлетсе тунă бизнес-план çитес çул нихăш енĕпе те кăçалхинчен кая ĕçлеме хушмасть. Çакăнпа пухăва пынисем те килĕшрĕç. Апла пулсан «Герой» ял хуçалăх производство кооперативĕн çĕр ĕçченĕсем çитес çулăн пĕрремĕш кунĕнченех тĕллевлĕ ĕçлеме пуçлĕç.

**А. БЕЛОВ.**